Фермăсенчи хĕл кунĕсем

# Э. ЗАМЯТИНА: “Çыншăн мар, хамăршăн ĕçлетпĕр”

*Черетлĕ ял хуçалăх çулĕн финишне тухрăмăр. Пĕтĕмлетӳ тума вăхăт çывхарать. Çулталăк каялла ĕмĕтленни пурнăçланать-и? Çак ыйту çине хурав шыраса ăратлă выльăх ĕрчетекен “Свобода” ял хуçалăх производство кооперативне çул тытрăм. Çатракассинчи сĕт ферми. Хăш-пĕр çĕрти пек кунти сарайсенче çил ачисене выляма вырăн çук. Выльăх тытмалли пӳлĕмсене хĕле çанă тавăрсах хатĕрлени тӳрех куç умне пулчĕ. Ĕçлекен çук тени те Çатракассисемшĕн ют: выльăх пăхакансем лаша ураписене сенаж тиенĕ те сарайсене турттараççĕ – ирхи апат параççĕ иккен, сарайĕнче вара сĕт сумалли аппарат кĕрлевĕн сасси – ирхи сăвăм пырать, пăрусен сарайĕнче те ĕçлĕ шăв-шав тăрать. Ферма заведующийĕпе Валериан Вениаминович Григорьевпа хуçалăхăн тĕп зоотехникĕ Эльвира Фадеевна Замятина та кунтах. Специалистсем ĕçсем епле пынине пăхсах тăни ăнăçусен пуçламăшĕ пулни пирки никамăн та иккĕленӳ çук. Çывхаракан Çĕнĕ çул ячĕпе ырлăх-сывлăх сунса Эльвира Фадеевнапа 2006 çулхи ĕç-хĕл пирки сăмах пуçлатăп.*



“Фермăра ĕçлекен культурăллă ларса чей ĕçейрет пулсан, кунти ĕç те малалла каять”, – теççĕ кану пӳлĕмĕнче ларакан кăмăллă çамрăк хĕрарăмсем Наталья Валерьевна Ивановапа Ольга Юрьевна Димитриева. Вĕсем иккĕшĕ те 4 çул ĕнтĕ 6 уйăхран аслăрах пăрусене пăхнă çĕрте ĕçлеççĕ.

– Пĕрисем кабинетра та теприсем фермăра кун иртternипе ĕç малалла каймасть. Пĕр ĕç тăватпăр вĕт, хамăршăн ĕçлетпĕр. Кун пек чух кашнин хăйĕн ĕç ответлăхне туймалла, кӳршĕне е юлташа май килнĕ чухлĕ пулăшмалла, палăртнă тĕллев патне пĕрле пымалла. Пирĕн хуçалăхра çак политикăна кашниех уçăмлă ăнланать. Çав шутра обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем те. Паян вара май килнипе усă курса вĕсене тата вĕсен çемйисене пурне те çывхарса килекен Çĕнĕ çул ячĕпе ăшшăн саламлатăп, йывăрлăхсем умĕнче пуç усмасăр çĕнĕ ӳсĕмсем патне çул хывма сĕнетĕп, кашниех выльăх-чĕрлĕх патĕнчи çăмăл мар ĕçре хăйне ырă енчен çеç кăтартса малашне те малтуртăмлă çеç вăй хурасса шанатăп. Такамшăн марçке, хамăршăн ĕçлетпĕр, – терĕ сăмаха пуçарса тĕп зоотехник.

**– Эльвира Фадеевна, 2005 çул кăтартăвĕсемпе сирĕн хуçалăх Чăваш Республикинчи чи лайăх 100 хуçалăх хушшинче 20-мĕш вырăн йышăннăччĕ. Япăх мар çакă. Анчах пĕлес килет, кăçал çак ӳсĕме аларан вĕçертмерĕр-ши?**

– Питĕ интереслĕ ыйту. Çулталăк хушшинче ятарласах ун çинче чарăнса тăрса ĕçлемен-ха та, анчах кашни кунах ĕçе ĕнерхинчен ăнăçуллăрах ĕçлес тесе тухрăмăр. Хамăр практикăра эпир Раççейре, республикăра малта пыракан, тĕрĕсленнĕ технологисене пурнăçа кĕртессипе ĕçлетпĕр: темĕнле пулсан та ăратлă выльăх завочĕн ятне çиллпе вĕçтерес, атте-асаттесем тунă ӳсĕмрен чакас килмест.

Сирĕн ыйтуран Эсир кăçалхи кăтартусем иртнĕ çулхинчен чакмĕç-ши тесе ыйтнине ăнлантăм. Кунта сăмахпа темĕн те калама пулать те кăтартусене пăхăр. Хальлĕхе çулталăк кăтартăвĕсем паллах мар пулсан та, 11 уйăх кăтартăвĕсемпе те чылай пĕтĕмлетӳ тума пулать. Акă, кăçалхи январь-ноябрь уйăхĕсенче ĕнесенчен пĕтĕмĕшле сĕт сăваслăх иртнĕ çул шайĕнчех юлчĕ. Хамăр шутланă тăрăх çакă çителĕксĕртерех, ăна ăнланатпăр, кăçал туса çитерейменнине çитес çула куçарас мар тетпĕр те халех тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем тăватпăр. Пуçламăш утăмсем пур ĕнтĕ. 11 уйăхра хуçалăхĕпе 1278972 килограмм сĕт сурăмăр пулсан, ку вăл иртнĕ çулхинчен кăшт пĕчĕкрех. Анчах кĕр кунĕсенче хăш-пĕр ĕнесем сĕт антараслăха ӳстернине пăхсан, çулталăк кăтартăвĕ пĕлтĕрхи майлах пулмалла. Кунта манăн кăçал Кашмашри сĕт ферминчи Е. Кириллова М. Петрова дояркăсем, Çатракассинчи сĕт ферминчи Н. Федоровапа Т. Обжелянская ĕне сăвакансем ăнăçуллăрах ĕçленине палăртас килет. Ыттисем те вĕсенчен нумай юлмаççĕ.

**– Хуçалăхра ытти выльăх-чĕрлĕх те пур вĕт: вăкăрсем, сыснасем?**

– Çапла, хирĕçлеместĕп. Вĕсене пăхакансем те хăйсен ĕçĕсене çӳллĕ шайра пурнăçласа пыраççĕ. Акă, майракаллă выльăхсене самăртассине илер. Кăçал кунти ӳтхушаслăх пĕлтĕрхинчен пысăкрах тухать. 11 уйăхра талăкри вăтам кăтарту кунта 711 грамм пулчĕ. Пĕлтĕр 700ре те çитейменччĕ. Выльăхсене самăртассипе Йӳтĕркассинчи майракаллă шултра выльăхсен ферми уйрăмах тăрăшуллă ĕçлет. Çулталăкри 11 уйăх хушшинче кунта Геннадий Белов, Луиза Кольцова, Владимир Дедов, Нина Матвеева пăхакан вăкăрсем талăксерен 924-шар грамм ӳт хушрĕç.

Сысна отраслĕ юлашки çулсенче нумай çĕрте тăкак пама пăрахрĕ. Ку савăнтарать, отрасль малашлăхне кăтартать. Сыснасене тупăшлă ĕрчетес тесен кунти технологие çирĕп пăхăнса пымалла. Эпир çапла тăватпăр та. Тĕллевлĕ вăй хуни ырă кăтартупа савăнтарать. Çапла майпа кăçалхи 11 уйăхра пирĕн хуçалăхри сысна пăхакансем ӳсĕм çулĕнчен пăрăнмарĕç. Сысна самăртакансем хуçалăхĕпе вăтамран хăйсен ушкăнĕнчи сыснасене талăксерен 456 грамм ӳт хуштарчĕç. Сыснасенчен çурасем илессипе те кăçалхи 11 уйăхри кăтарту çулталăк каяллахинчен сумлăрах: пĕлтĕр хуçалăхĕпе 4558 çура илнĕ пулсан, кăçал 4776 çура илни Раççей Президенчĕ В. Путин палăртнă наци проекчĕпе малалла ĕçлеме çул уçать. Кунта кăçал уйрăмах Кашмашри сысна ферми малтуртăмлăрах ĕçлени сисĕнет.

**– Халĕ эпир Çатракассинчи сĕт ферминче тăратпăр. Нумай-и кунта выльăх, çитет-и вĕсене пăхакан?**

– Пĕчĕк ферма мар ку пирĕн. Пĕтĕмĕшле 35 çынран тăракан ĕç коллективĕ 400 ытла пуç выльăх пăхать. Çӳлерех куртăр ĕнтĕ, кăтартăвĕсем те начар мар. Сĕт сăваканĕ те, пăру пăхаканĕ те, тислĕк кăлараканĕ те, выльăх тухтăрĕ те, платникĕ-конюхĕ те вырăнтах пулни кирек епле ĕççене те вăхăтра пурнăçлама май парать. Халĕ час-часах фермăсене çамрăксем сахал ĕçлеме пыраççĕ тесе ӳпкелешнине илтме пулать. Пирĕн патăмăрта ку ыйту çивĕч тăмасть. Çакăнта хуçалăх ертӳçи Кронид Ефимович Сретинский çамрăксемпе ĕçлесси çине тимлĕ пăхнине те палăртмалла. Акă Çатракассинчи сĕт ферминчех çуррине майлă çамрăксем вăй хураççĕ. Вĕсене валли кунта ĕçлеме те, ĕç хыççăн канса илме те условисем çителĕклĕ. Акă, выльăхсене пăхакан Юрий Павловпа Лидия Федорова хăйсен ĕçĕнче пĕр улшăнмасăр нумай çул ĕçлеççĕ. Н. Ивановапа О. Димитриева пăру пăхакансем те хăйсен ĕçĕпе ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ.

**– Паян хуçалăх сĕт сăвассипе районта малтисен ретĕнче. Çатракассинчи сĕт ферминчи ĕнесен талăкри рационĕ пирки виç сăмах каламăр-ши?**

– Çатракассинче-и е Кашмашра, ĕнесен рационĕ пĕр майлах. Хĕл хырăмĕ пысăккине шута хурса ĕçлерĕмĕр иртнĕ çу кунĕсенче. Çавăнпа та паян апат çителĕксĕр тесе ларма сăлтав çук. Ĕнесене кунсерен 3,5 – 4 килограмм çăнăх, 15 кг сенаж, 3 кг утă тата 3 кг улăм, 17 кг выльăх кăшманĕ паратпăр. Çапла ĕçлесе талăксерен пĕр ĕне пуçне 11-12 килограмм сĕт сăватпăр.

**–Хĕл кунĕсем апат шыраса иртмеççĕ пулсан, эсир умри тĕллевсене пурнăçлассипе иккĕленӳ çук. Апла пулса Сире уяв ячĕпе саламлама та вырăнлă. Ăнăçу сирĕнтен ан хăптăр.**

– Тав та пуç ăшă сăмахсемпе ыррине шаннишĕн. Эпир ăна пурнăçлассишĕн район ертӳçисем те, республикăпа Раççей пуçлăхĕсем те ан иккĕленччĕр. Ĕçри хамăрăн ăнăçусемпе эпир вĕсене те Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатпăр.

**Анатолий БЕЛОВ калаçнă.**



Сăн ӳкерчĕкре эсир сылтăмран сулахаялла Çатракассинчи сĕт ферминчи Тамара Николаевна Обжелянскаяпа Любовь Витальевна Смирнова дояркăсене куратăр. Тамара ĕне сунă çĕрте 7 çул ĕçлет пулсан, Люба – 20 çул. Иккĕшĕ те малта пыракан дояркăсем, ĕçĕсемпе ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ.



Фермăра ĕçлекен кашни ĕçчен хăйне шаннă ĕçе тивĕçлипе туса пырсан ӳсĕмсем кĕттерменнине Çатракассинчи ĕне ферминчи ĕç-пуç та çирĕплетет. Ферма заведующийĕ В. Григорьев (хыçалти ретре сулахайран иккĕмĕшĕ) тата хуçалăхăн тĕп зоотехникĕ Э. Замятина (иккĕмĕш ретре сулахайран тăваттăмĕшĕ) яланах ферма ĕçченĕсем хушшинче.

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**Кам епле ĕçлет?**

**Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче декабрĕн 23-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшле тата пĕр ĕне пуçне мĕн чухлĕ сĕт сунине кăтартни (килогрампа).**

**Колонкăсенче: 1. Пĕтĕмпе сĕт сунă. 2. Пĕр ĕне пуçне.**

| | 1 | 2 |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 1070 | 6,3 |
| “Волга” | 860 | 10,5 |
| “Восток” | 1020 | 10,2 |
| “Герой” | 1790 | 10,2 |
| К. Иванов яч. хис. | 350 | 4,3 |
| Ильич яч. хис. | 2600 | 10,4 |
| Ленин яч. хис. | 2100 | 10,5 |
| “Лидер” | 800 | 8,4 |
| “Нива” | 350 | 7,8 |
| “Оринино” | 2865 | 14,0 |
| “Передовик” | 1060 | 5,5 |
| “Свобода” | 3437 | 11,8 |
| “Сеятель” | 560 | 5,6 |
| Суворов яч. хис. | 2180 | 10,9 |
| “Рассвет” | 950 | 4,0 |
| “Ударник” | 5500 | 10,0 |
| “Хлебороб” | 300 | 6,1 |
| Чапаев яч. хис. | 1200 | 6,9 |
| “Чемеево” | 900 | 8,2 |
| Чкалов яч. хис. | 760 | 11,9 |
| КФХ Михайлов | 290 | 9,7 |
| КФХ Отенов | 540 | 7,8 |
| Ытти КФХсем | 200 | 11,8 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **31682** | **9,1** |

# Кĕрхи призыв вĕçленчĕ

Декабрĕн 21-мĕшĕнче районти çар ĕç комиссариатĕнчен кăçалхи кĕрхи призывпа çара каякансен юлашки ушкăнĕ çула тухрĕ.Çывăх тăванĕсемпе тус-юлташĕсем эсир сăн ӳкерчĕкре куракан (сулахайран сылтăмалла) Владимир Андреева (Çĕньял Шурча), Рудольф Ермолаева (Нискасси), Александр Васильева (Ярапайкасси), Петр Алексеева (Ярапайкасси) ăнăçу сунса телейлĕ çул сунчĕç. Çакна каласа хăвармалла, çак ушкăн çара кайнипе районта кăçалхи кĕрхи призыв вĕçленчĕ.



## Аннесем, аннесем...

**_Автортан._ Вуншар каччă кашни çуркуннепе кĕркунне мирлĕ пурнăçа сыхлама Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен ретне тăрать. Калама çеç çăмăл, анчах 2-3 çултан яла чăн-чăн арçын сăнĕ кĕнĕ, ĕçе çиччĕ виççе пĕрре касма вĕреннĕ кĕрнеклĕ яшсем таврăннине курсан чун савăнать. Çакна шута илсе хамăн сăввăма ывăлĕсене паян çара ăсатакан амăшĕсене халаллатăп.**

Аннесем, аннесем, мĕншĕн макăратăр?<br>
Е хăрушă вăрçăна халь те астăватăр?<br>
Аттесем вăрçа кайсан, пурнăç йывăр пулнă,<br>
Аттесем унта вилсен, эсир тăлăх юлнă.<br>
Хуйхă каснă чĕрене,<br>
Йĕр хăварнă пит çине...

Аннесем, аннесем, вăхăт çитрĕ савăнма.<br>
Мирлĕ, ырă пурнăçра пултаратăр халь канма.<br>
Çавăнпа та, аннесем, эп ыйтасшăн сирĕнтен:<br>
Мăнуксен çара кайма вăхăтпа черет çитсен,<br>
Ан юлсамăр пит йĕрсе,<br>
Пиллĕр, пултăр Мир, тесе...

**Зинаида ЯГУНОВА.**

Кăпас ялĕ.

Ватлăх хисепе тивĕçлĕ

# “Ачасем юратни ман ĕмĕре вăрăмлатрĕ”



Пирĕн районта 95 çул урлă каçнă икĕ ватă пурăнать. Юнкă ялĕнчи С.В. Овчинников 1907 çулхи апрелĕн 24-мĕшĕнче çуралнă, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕ.

Татьяна Трифоновна Трифонова **(сăн ӳкерчĕкре)** 1908 çулхи январĕн 2-мĕшĕнче Актай ялĕнче çуралнă. Ку ялти хастар çамрăкпа çемье чăмăртанă. Вăл 5 ача çуратнă: 4 хĕр тата ывăл.

Мăшăрĕ Иван Тимофеевич Соловьев, 1901 çулта çуралнăскер, колхоз председателĕ пулнă. Вăрçă пуçлансан малтанхи кунсенчех вăл хăй ирĕкĕпе фронта кайнă. 1942 çулта Ржев хули патĕнче пуçне хунă. Ăна Гусево ялĕ çывăхĕнче пытарнă.

Татьяна Трифоновна, ялти ытти хĕрарăмсем пекех, ир пуçласа мĕн каçчен тăван уй-хирте вăй хунă. Çĕнтерĕве çывхартнă. Хăйĕн ачисене ура çине тăма пулăшнă.

Унăн ачисем пурте аслă пĕлӳ илнĕ. Валентина Ивановна Чăваш педагогика институтне пĕтернĕ. Вăл тивĕçлĕ канăва тухиччĕнех Йӳçкассинчи вăтам шкулта ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. Елизавета Ивановна та çак аслă шкултах пĕлӳ илнĕ, пĕтĕм пурнăçне педагогика ĕçне панă. КПСС Муркаш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче те вăй хунă. Любовь Ивановна та ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. Эльвира Ивановна, биологи учителĕн специальноçне илнĕскер, “Чувашия” санаторире лабораторил заведующийĕнче ĕçлет. Семен Иванович медицина факультетĕнче вĕреннĕ, ГЭСстройра ĕçленĕ.

Хăйĕн ачисемсĕр пуçне Татьяна Трифоновна тăлăх ачана Василие пурнăç çулĕ çине кăларнă. Вăл физикăпа математика факультетĕнче вĕреннĕ.

Татьяна Трифоновна хăй шкула çӳремен. Апла пулин те вăл кĕнеке, хаçат-журнал вулама юратнă. Паян кун та вăл телевизор пăхать, радио итлет, хаçатпа интересленет. Татьяна тăхлачă паян хăйĕн мăнукĕн мăнукĕпе Антонпа пĕрле пулма юратать.

Вăл хăй нумай пурăннине сывă пурнăç йĕркине тытса пынипе тата ăна ачисем юратнипе ăнлантарать.

Çак кунсенче Татьяна Трифоновна патĕнче хăнара районти социаллă пулăшу пайĕн ертӳçи Н.П. Петрова, çак пай ĕçченĕсем С.Е. Илларионова, Ю.П. Пугачева пулчĕç. Хисеплĕ ватăна парне парса телей тата çирĕп сывлăх сунчĕç. Татьяна тăхлачă вĕсене 100 çулхи юбилее килсе курма чĕнчĕ.

**А. ИВАНОВ.**